И. ВИКТОРОВ

# ÇЫРМАРА

Виçĕ стсенăллă пĭесса

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви

МУСКАВ 1929

И. ВИКТОРОВ

# ÇЫРМАРА

## (ИАЛТИ ПУРĂНĂÇРАН)

ВИÇĔ СТСЕНĂЛЛĂ ПЙЕССĂ

ЦИВИЛЬСКАЯ
Библиотека

СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ
МУСКАВ 1929

КНИЖНАЯ ФАБРИКА
ЦЕНТРАЛЬНОГО
ИЗДАТЕЛЬСТВА
НАРОДОВ СССР
МОСКВА ШЛЮЗОВОЙ
ПРОЕЗД ДОМ № 6

Главлит № А 41135
Тираж 2000 экз.

Заказ № 882

# АВТĂРТАН.

Пирĕн ђăваш йалĕсенђе пур çĕрте те пысăк стсенăсем çук, хăш-пĕр ђухне пĕђĕкрех пуртсенђех çпектаккăђ лартмалла пулаŤ. Ун пек ђухне тĕрлĕрен теккоратсисемпе пӳрте тăвăрлантарма май килмест.

Çавăнпа та ун пек ђухне малтанхи стсенăра **пахђа вырăнне лаç ăшђикĕ пек тума тайураŤ.** Кун пек ђухне вара малтанхи стсенăна Пађукăн:—

„Кайса йарам-ха ыйха, вара унта курăнĕ"—тенĕ сăмахĕсем хыççăн пĕтерсе ђаршав хупма та йураŤ. Йе ђаршава вăхăтлăха хупса лаççăн тулаш йеннине туса лартма пулаŤ. Вара Уçтукпа Иван лаç умне пырса лараççĕ те, Пађук та вĕсене унта каласса ларнине кураŤ.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш стсенăсем вађђи пĕр теккоратсийех те йураŤ (пӳрт ăшђикĕ). Кунта вара пӳрт ăшĕнђи йапалаcене çех пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса лартмалла пулаŤ. Иккĕмĕш стсенăра кăмака кирлĕ, виççĕмĕшĕнђе кирлĕ мар.

Мускав, 28—III—1929 ç.

ПИЕССӐРИ ҪЫНСЕМ:

Паљук—йал куштанӗ, ђейескер, 50 ҫулта.

Арӑмӗ—хӑравҫӑрахскер, 44 ҫулта.

Уҫтук—ҫитӗннӗ хӗр } вӗсен
Микуҫ—селӗпскер, 7-8 ҫулта } ађисем.

Петӗр—маттурскер, комсомолӗс, 21 ҫулта.

Ҫемен—унӑн йулташӗ, унпа пӗр ҫултах.

Иван—тӑлӑхскер, Уҫтукӑн варли, 19 ҫулта.

Йакку—ђухӑн ҫын, ӗҫме йуратаӗ, 31 ҫулта.

Кӗтерук—унӑн арӑмӗ, 29 ҫулта.

Иван Иванђӑ—йалсовет претҫетаттӗлӗ, 35 ҫулта.

Сӑрнай—шухӑшласа калаҫма пӗлмест, кађака сухалӗ пек шӳреке сухаллӑ ҫын, 51 ҫулта.

Милитси, суйе, саҫҫетаттӗлсем, ҫыруҫӑ.

---

Ӗҫӗ 1923-мӗш ҫулта, ҫула пулса иртет. 1-мӗшпе 2-мӗш стсенӑ—йалта, 3-мӗш—халӑх сутӗнђе.

---

## МАЛТАНХИ СТСЕНĂ.

*Каç пулнă. Уйăх çутти. Йăвăç пахчинче çырмара Пачук ханша йухтарса ларат.*

Пачук *(сыпса пăхса)*.

Мĕн мар çак...
Хамăр тунă йапала?
Каçункăри ерехрен
Виç-тăват хут хăватлă.

*(Черке çине тултарат).*

Пăх-ха ĕнтĕ, кĕмĕл пек,
Çак пĕтĕмпех хăвачĕ
Малтăртатать черкере. *(Ĕçет).*
...Мĕншĕн ĕçес мар?—
Укçа парса илес çук...
Йух-йух, ханша, йух, ханша,
Ыр çынсене ўсĕртме.
Çун-çун, вуттăм, çун, вуттăм,
Ханши йухтăр йанраса.

*(Кăвайтне тўрлетет).*

Ханша начар пулсассăн,
Йепле пăхас хăнама?
Кĕрў туйпа килсессĕн,
Йепле тăрас куç умне? *(Ĕçет).*

...Ах, аван... аван. Хайар мĕн.
Пуç патнех пыџĕ... Ха-а?..
Мĕншĕн пирĕн куљанас
Хамăр ерех тунă џух?..

(*Йерипен йурлама пуçлаť*).

— Шăнкăртатса шыв йухаť
Хăйахпа хумăш хушшинџе,
Ирттеретпĕр пурнăçа
Сăра-ханша кӳллинџе,

(*Каллех ĕçет*).

Ах, аван-çке, мур ханши,
Пуçа çавраť хăй майах.

(*Ӳсĕрĕлсе çитнĕ, малалла йурлаť*).

— Ханша йухаť тăп-тăрах,
Џăхăр пырша йанраіса;
Йĕри тавра лăп-лăпах,
Уйăх пăхаť çутатса.
Урам пыљџăк вăхăтра
Ура шуçсан—кам ӳкмест;
Ханша йухнă вăхăтра
Патĕнџе ларсан—кам ĕçмест.

(*Айакран купăс сасси илтĕнет. Çамрăксем шавлаççĕ, йурлаççĕ*).

Çапах кĕрсе çывăрман...

(*Шикленерех*).

Епĕ кунта ларнине
Сисмен пуљ те çамрăксем.
Вĕсем сиснĕ пулсассăн,
Кĕтмелли çук ыррине.

Вăрçă иртнĕренпеле
Самана та улшăнҫĕ,
Çамрăксем те пăсăлҫĕç:
Турра ĕненми пулҫĕç,
Ваттисенҫен иртеççĕ...
Çук, çук... Капла йурамасҭ.
Кун пек ĕнтĕ малашне
Май килес çук пурăнма.
Пуйан çынран иртмелли
Хăçан пулнă тĕнҫере?
Епĕ çукрах пулсан та—
Пур çынсене йуранă.
Вĕсем ĕçнĕ вăхăтра
Курки тивнĕ мана та.
Ҳалĕ мансăр пĕр çын та
Йалта ĕçкĕ тăваймасҭ...

(*Ҫерке çине тултарса*).

Çакă, таса, çут шыва
Паљук ахаљ тăкас çук.
(*Ĕçет те, йурлама тытăнат*).—
— Пурăннă ҫух савăнас,
Вилсен кăна курас çук.
Çак ҫеркепе мĕн тăвас—
Тултарас та ĕçес-ха. (*Ĕçет*).
Кун иртет те, çул иртет—
Пирĕн ĕмĕр кĕскелет...

(*Сасăсем çывăхараççĕ. Купăс сасси çырмана йанратать*).—

Мĕн ку?!. Ăçта çак
Çĕр хута кайаççĕ-ши?..

А-аа... Киремете кайаççĕ,
Унта вăйă тăваççĕ.

*(Кăватне тўрлетет).*

Сасăсем.

Авă, кăват йалкăшат...
Мĕн тăваççĕ-ши унта.
...Атăр, кайса пăхăпăр—
Мĕн тунине курăпăр...

Паљук.

Ах, хăйамат аҭисем,
Ҭăнах кунта килеççĕ.
Мĕн тăвас-ха ман ĕнтĕ?
Йепле сирес инкене.

*(Кăватне вăйсăрлатат).*

Ку таранҭҭен никам та
Манăн ĕçе сисменҭҭĕ.
Ĕнтĕ сисрĕç... Малашне...

*(Çеменпе Петĕр кулкаласа кĕреççĕ).*

Çемен.

Паљук пиҭҭе, ан çилен:
Ҭăрмантарса çўретпĕр...

Паљук.

Сире... сире мĕн кунта...?

Çемен.

Ĕсĕ ханша тунине
Килсе курас терĕмĕр.

Милитсине систерсе—
Ђăрмантарас терĕмĕр.

Паљук (*хăрасарах*).

Ађа... ађасем, мĕне сире...
Хурлантарма ват сынна.
Хам та пĕлеп—аван мар.

Хĕр-туй тума шутласан,
Унсăр майĕ тухас çук...
„Хлепнăй“ тавраш не илме
Вăй çитеймест, пĕлетĕр.
Хăна-вĕрле умĕнђе
Тухас марђђĕ намăса.

Петĕр (*Çемене*).

Иепле йурла пуçларĕ...
Сисет кушак айăпне,
Сирме шутлаť инкекне...

Паљук.

Ађамсем, йулташсем,
Шеллĕр мана ват сынна.
Çемен, санăн аçу-аннӳпе
Иалан пĕрле пурăннă—
Çамрăксем те пирĕн пек
Лайăх, пĕрле пурăнђђĕр...
Петĕр, Çемен, итлĕр-ха:
Хăна-вĕрле умĕнђе
Есир пулăр ђи пахи.
Уçтук туйĕ килсессĕн—
Кĕрекерен кăлармăп.

Петĕр *(кулса).*

Епир сана суйе мар,—
Мĕн пуласси не—курăн.
Хăна-вĕрле умĕнҫе
Пире пулма тивĕç çук...
Ата, Çемен, кайăпăр—
Тата вăйă та иртĕ,
Унта пире кĕтеççĕ.

Сасăсем.

Петĕ-ĕĕр!.. Çе-ме-еен!..
Ҫасрах...

Çемен.

...Пире ҫĕнеççĕ...

Петĕр.

Ата, кайар, вăййалла...
*(Тухса кайаççĕ).*

Палук

*(Пĕтъҫенех, шухăша кайса).*

Мĕн пулҫĕ-ха ку капла?..
*(Сасартăк).*

— Ах, киремет пуçĕсем,
Пурра, çукка шăршлаççĕ...
Çав косомол, камунсем
Ырă кун-çул парас çук.
Кам пĕтерет пурнăçа?
— Пур çĕрте те камунсем...

Ех, самана, самана...
Йепле есĕ улшăнтăн...

*(Çавăнтах хĕпĕртесе, кăвайне тӳрлетсе).*

Çун, çун, вуттăм, йалкăшса—
Йухтăр ханши васкаса...
Хăна-вĕрле килсессĕн
Ура çинҫе тăраймĕ...

*(Йунаса).*

Ы-ых, йытă çурисем!
Епĕ сире кăтартăп...
Епĕ хам та пĕлетĕп—
Мĕнрен усă пуррине.
Мĕнпе кĕсйе тултарас?
— Лăпăр-лапăр çӳп-çапран,
Тирпейлесе йухтарсан,
Ҫылай укçа алăра...
Акă мĕнпе çын пуйат.

*(Тултарса).*

— Тултарам-ха ҫеркине,
Ианклаттарам çуттине. *(Ĕçет).*
Ах, аван-çке, кĕмĕл шыв—
Çунтарат çех ăшҫике!..
Ма пурнас мар пурнăçа—
Кĕсйе тулли укçам пур,
Сакай тулли ханшам пур,
Нӳхреп тулли сăрам пур.
Пӳртĕм тулли хĕрĕм пур,—
Ма ĕçес мар савăнса.

*(Ĕçет. Вăл вăхăтрах арăмĕ кĕрет).*

Арăмĕ.

Килте цуçтаркаласа
Ꚅилеймерĕм кунта ꚅас.
Йухаҭ-и?..

Палꚅук *(пуçне çĕклесе).*

...Ак, хăйамат,
Илтрĕ пулꚅ. *(Арăмне)*—Йухаҭ майпе.
Пĕр вăхăтра, апăрша,
Пакрама та тытăнꚅĕ.

Арăмĕ.

Ꚅылай йухрĕ-и?

Палꚅук.

Виççĕ ытларах анꚅах.
Тата тепре йухĕ-ха.
Ахалꚅ мар, вĕт, виçĕ кун
Ларꚅĕ пăраки ꚅашкăрса. *(Ꚅарăнса).*
— Мĕнле, Уçтук таврăнꚅи?

Арăмĕ.

Çук-ха, тавăранаймарĕ.
Илтетĕн пулꚅ — шуйăхаççĕ,
Вăл та унта пулмалла.

*(Айакран купăс сасси илтĕнет. Йурлаççĕ).*

— Хампар умĕнꚅи вир пăтти, вир
пăтти *(2 хут)*
А-ах, витĕр пăхса çийесꚅĕ *(2 хут)*
Хампар умĕнꚅи пăттине, пăттине
*(2 хут)*

А-ах, витĕр пăхса çиñес çук (*2 хут*)
Уçтукпала Ивана, Ивана (*2 хут*)
А-ах, ђуп тунине куртăмăр (*2 хут*)
Уçтапкала Ивана, Ивана (*2 хут*)
А-ах, сивĕннине кӳрас çук (*2 хут*)

Паљук.

...Мĕн унта?
Пирĕн Уçтука сутаççĕ мар-и?
Ах, мур ађи-пăђисем...
Çитменнине тата
Çавă тăлăх Иванпа... (*Арăмне*)—
Амĕш, есир—хĕрарăм
Сискелетĕр пулмалла...

(*Вăйăра шуйăхаççĕ*).

Мĕнле Уçтук Ивана
Йуратаĭ-ши ђăнах та?

Арăмĕ.

Хĕр ђĕрине пĕлес çук.
Тен пулĕ...

Паљук.

...Вăл ман хĕр.
Ăçта пама шутлатăп—
Çавăнта çех паратăп.

Арăмĕ.

Апшĕ-амĕш сăмахне
Ађа-пăђа итлĕ-ха.

(*Кăватне тӳрлетет*).

Паљук *(ĕçет).*

Ах, аван-çке, мур ханши!
Амăшĕ, ĕçсе пăх-ха.

*(Тултарса парать).*

Итлемесен еп ăна.—
Йепле пулаҭ аҕапҕа—
Илĕртнипех пăсăлаҭ.

Арăмĕ *(сыпса пăхса).*

Нимĕн тути те çук, вĕт.
Сӳнтерес пуљ кăваҭне.
Кун-пуç çути килиҕҕен
Ҕасрах кунтан пуçтарас:
Çынсем курсан тем калĕç.

Паљук *(ӳсĕрĕлнĕ).*

Йурĕ, йурĕ... тытăнар,
Пă... пăракине пушат...

*(Хуранне йăтса тухса кайать).*

Арăмĕ.

Ырра кĕтмест ман ҕĕре...

Паљук *(кĕрет).*

Ахаљ мар, ахаљ мар...

Арăмĕ *(хăраса).*

Мĕн ахаљ мар?..

Паљук.

Ы-ых, сире
Хĕрарăма шансассăн.

*(Автансем авăтаççĕ).*

Сасăсем *(айакра).*

Аҭăр, ĕнтĕ саланар.

Паљук.

Ђзсрах хуран тасатас,
Ќаллех килсе те пăхĕç.

Арăмĕ.

Кам та пулин курђĕ-им?

Паљук.

Уксах Çемен Петрипе
Шырлан Çеменĕ курђĕç.

Арăмĕ.

Ах, пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр...
Ахаљ мар çав ăш вăркаҭ.

Сасăсем *(йурласа çывăхараççĕ).*

— Сăрт çинелле хăпарса
Ăçтан вăйăм пĕтес мар.
Ќуштан тире сĕвнĕ ђух
Йепле хирĕç тăрас мар.

Паљук.

Ав, каллех шире курайнаççĕ.
Епирех путсĕр йал çинђе...

Арӑмӗ.

Ҫук... Ку ђухнехи ађапђа
Ытла пӑсӑлса кайрӗ.
Мӗн тунӑ-ха вӗсене...
Мӗн...

Микуҫ *(ђупса кӗрет).*

Атте, анне пий паťа
Иасапайа айайтан...

Арӑмӗ.

Ах, пӗтрӗмӗр, пӗтӗмӗр...

Паљук *(ӗҫлеме пӑрахса).*

Мӗн тетӗн?..

Микуҫ.

...йасапайа..

Паљук *(васкаса).*

Кам?... Мӗн?...

Микуҫ.

...Иван питťе те...

*(Паљукпа арӑмӗ ђӗтреве йернӗ).*

Микуҫ.

Аҫу ӑҫта каййӑ, тет.
Вайа епӗ ҫаййанах
Ђупйӑм куйта сий паťа...

*(Сасӑсем ҫывхараҫҫӗ. Йурлаҫҫӗ. Паљук нимӗн тума аптӑраса тӑрат).*

Арăмĕ.

Ах, кунталлах килеççĕ...
Пĕтрĕмĕр...

*(Хăранипе ниçта кĕрсе кайаймаст. Пĕр кĕлентџинь йăвантарса йарат).*

Палџук *(ăна курса).*

Ах, мур... *(Џышкине тџăмăртса).*
Ăçта санăн куçусем?

*(Çамрăксем йурласа иртсе кайаççĕ. Хĕрсен сассисем:*

Ай-ай, пăшалпа!..)

Палџук *(хăраса).*

Мĕн?.. йе кунта милитси?..
Ех, çынна курайmаççĕ...

Арăмĕ *(Микуçа).*

Аĥа, кайар-ха киле.
Тата шăна та пуçлăн *(тухса кайаççĕ)*

Петĕр *(стсенă хыçĕнтџе).*

Ав, кăваџĕ те çунмасť,
Тухса кайма ĕлкĕрнĕ-им?..

*(Петĕр, милитси, претçетаттĕл, йашсем кĕреççĕ).*

Милитси.

Тĕлнех пултăмăр пулас...

Петĕр.

Çын курман џух, çĕр хута...

Иван.

Ханша тăваҭ йал куштанĕ.

Милитси.

Ну, йулташсем, тытăнар
Куштан ĕçне йĕрлеме.

*(Паљука).*

Хуçи есĕ-и-ха кунта?

Паљук *(тђĕтреве йернĕ пек).*

Е...е...еп...ĕ...

Милитси.

Хăçантанпа çак ĕçе
Ес тытăннă-ха ĕнтĕ?

Паљук.

Пайан кăна тытăнтăм...
Хĕр-туй ваљљи...

Петĕр.

Тин çех кăна пуçăннă?!..
Йĕри-таврари йала
Кам ăсатаҭ ханшана?..

Милитси.

Ес, йулташăм, тăхта-ха...

*(Претçетаттĕле).*

— Куштан Павăл çак ĕçпе
Миçе çул хушши ĕçлет?..
Йалсовеђĕ ун ĕçне
Сиснĕ пулсан мĕн тунă?..

Претçетаттĕл.

Пирĕн пиҫҫе ку ĕçпе
Çак таранҫҫен хăтланман...

Милитси.

Киле кайса тăмăпăр,
Сĕтел кунтах тупăпăр.
Кŷр-ха, йулташ, пиҫĕке,
Унтан сĕтел тăвăпăр.

*(Петĕр питъĕкене çавăрса лартат).*

Петĕр.

Уйăх çутти пирĕншĕн
Лампă вырăнне пулĕ.

Милитси.

*(Каска çине ларса, Паљука)—*

Хушамту сан—Куштан,
Açу йаҫĕ мĕнле-ха?

*(Çамрăксем пĕр-пĕрине пăшăлтатаççĕ).*

Паљук.

Мана пурте „Паљук“ теççĕ.
Тĕне кŷртнĕ паҫăшка
„Павăл“ тесе йат пана...

Милитси.

Санăн йатна пĕлетпĕр,
Кала ҫасрах açунне--
Açу санăн мĕн йатлă?

Паљук.

Пирĕн атте—Ивакка,
Хушаматăм та çаплах.

Милитси.

Сут умĕнђе пулман-и?

Паљук.

Аллă иккĕ тултарса
Сута кайса курманђђĕ.

Петĕр.

Хаљ кайатăн ĕнтĕ...

Милитси.

Килти пурнăç мĕнле сан,
Кала пĕтĕмпех кунта.

Паљук.

Икĕ лаша, пĕр ĕне,
Тата тăхăр сурăх пур.
Кĕрсе тухма кил-çурт пур...

Милитси.

Тата кала малалла.

Паљук.

Хур-кăвакал шутра мар,
Сысна пекки виççĕ пур.

Милитси.

Суйма кунта йурамасҭ,
Кала есĕ тĕрĕсех.

Палӑк.

Нихҫан суйса курман...

Иван.

Пайан суйма вӗреннӗ.
Виҫӗ лаша—иккӗ мар,
Ене иккӗ—пӗрре мар.
Сурӑх-сысна миҫине
Пит лайӑхах пӗлместӗп,
Ытларах пек туйӑнать.
Тата ҫирӗм вӗлле хурт.

Палӑк.

Кураймасӑр калать вӑл.
Хӗре йутта панӑшӑн
Ҫиленнӗ вӑл ват ҫынна.

Милитси.

Урӑх ҫулпа ан ҫуптар...
Хӑҫантанпа тытӑннӑ
Есӗ ханша пӗҫерме?

Палӑк.

Хал тин кӑна тытӑнтӑм,
Хӗр-туй валли кирлӗ те.

Милитси.

Нихӑҫан та ханшапа
Сутӑ туман-и?

Палӑк.

Турӑ пур,
Нихӑҫан та хӑтланман.

Милитси.

Алă пус-ха çакăнта.

Паљук *(айккинелле).*

Ех, çаклантăм, курăнаť.

*(Милитсине).*

Çырма епĕ пĕлместĕп.

Петĕр.

Суйаť те мĕн...

Милитси.

Ну, ђасрах!..

*(Паљук алă пусаť).*

— Ĕнтĕ есĕ пăрăн-ха.

*(Çамрăксем куклаласа тăраççĕ).*

Милитси *(претçетаттĕле).*

Есĕ ĕнтĕ мĕн калăн?

Претçетат.

Е... е... е...

Милитси.

Мĕн ђĕлхў сан çухалђĕ-им?
Кала есĕ кирлине.

Претçетат.

Пит аванах пĕлместĕп.
Ним калама аптратăп.
Епир уйрăм пурнатпăр...

Ир-каç курсах каймастпăр.
Ман шухăшпа, ку ĕçре
Айăп çук пек туйăнать.
Питтен хĕрĕ çитĕннĕ...
Катта пама вăхăтĕ...
Хăта тавраш йĕрлерĕ,
Питте пама шут тытрĕ...

Петĕр.

Ну йурлать те йуррине.
Пĕр çул çинтех тăраççĕ...

Милитси *(претçетаттĕле).*

Кала, йулташ, малалла.

Претçетат.

...Ерех-сăра ун пек тух
Çук çынна та кирлĕ-çке.
Питте ытла çук çын мар,
Хăна-вĕрле таврашне
Пăхмасассăн килĕшмест... *(Тарăнать).*

Милитси.

Каласа та пĕтрĕ-им?

Претçетат.

Урăх мĕн калас пуль ман...

Петĕр *(милитсине)*

Йулташ, сăмах пар-ха.

Милитси *(претçетаттĕле).*

Хаҫ каланă сăмаха
Сут умĕнҫе калăн-и?

Претçетат.

Мĕн тумалла сутпала?.. *(Шухăшласа).*
— Кирлĕ пулсан, калăпăр...

Милитси.

Алă пус-ха çакăнта...

*(Петĕре).*

Кала ĕнтĕ, йултăшăм.

Петĕр.

Паҫук йалта ҫухăна
Тирне сĕвме тăрăшаť.
Ханша тума пуçлани
Ҫылай пулаť пулмалла.
Анҫах вăрттăн ĕçлесе
Çын сисесрен хăтăлнă.
Паҫук йалта мĕнлине
Ватти-вĕтти пĕлеççĕ...

*(Тул çутăлни палăраť).*

Иван.

Петĕр кунта калани
Пурте тĕрĕс—суйа мар.
Вăл сăмахсемшĕн пурте
Алă пусăпăр епир. *(Алă пусаççĕ).*

Милитси *(претçетаттĕле).*

Ĕнтĕ кăлар пиђетне,
Тытăнăпăр ĕçлеме.
Йулташсем,
Пулăшăр-ха пурсăр та.

*(Кĕлентђесене питĕрсе питђетлеме тытăнаççĕ).*

Çемен *(кулса).*

Ех, çакланђĕ те тилĕ...

Пĕр йаш.

„Уй-хир куçлă“ теççĕ çав...

Петĕр.

Вăрманăн та хăлхи пур...

*(Питђетлесе пĕтереççĕ. Автансем авăтаççĕ).*

Милитси.

Ĕçе туса татрăмăр.
Тул та çутăлса килет.
Претçетаттĕл, итле-ха:
Мĕн пур кунти тăркăша
Турттарăпăр сан пата.
Вара кайран...

Петĕр.

Вырăнне
Кайса епир леçĕпĕр.
Атăр, йăтăр, йулташсем.

*(Çамрăксем хуранне, валашкисене, труписене, кĕлентђисене йăтса тухаççĕ. Претçетаттĕл хыçалтан кайма тăрать).*

Паљук (*ăна*).

Иван, йул-ха вăхăтлăх,
Сăмах пур-ха ман санпа.

Претçетат.

Мĕн сăмах вара?..

Паљук.

...Есĕ
Йĕркине пĕлетĕн пуљ:
Йепле сирес инкеке?

Претçетат.

Нимĕн тума та çук хаљ,
Сутсăр ку ĕç иртес çук.
Хамăр майлă çынсене
Тупас пулаĭ шыраса.
Лайăх çивђĕ-витĕмли
Пĕр-ик çынна тупсассăн,
Сирме пулĕ инкекне...
Йе маларах укçапа
Сутне çаврас хамăр май...

Паљук.

Сана унта пĕлеççĕ,
Пулăш, шăллăм, инкекре.

Претçетат.

Йурĕ, пиђђе, тытăнăп.
Хаљ кайам-ха килелле.
Унта мана кĕтеççĕ.

Епӗ килте пулмасан,
Хам та лекӗп инкеке.
*(Тухса каймa тăрат).*

Паљук.

Ђим-ха, Иван, тăхта-ха...

Претçетат.

Леш, апăрша, кайтăр-ха.
Вара ӗçе тытăнар... *(Тухса кайат).*

Паљук *(йӗритавра пăхкаласа).*

Илсе кайнă пӗтӗмпех...
Ех, апăрша, апăрша!..
Ку таранђђен сисменни—
Пайан пӗлђӗç мӗнлине...
...Камун çав вăл.
Ăна епир çаврас çук.
*(Сасартăк).*
Çук—куљанма кирлӗ мар.
Ўкçа пулсан—пурте пур...
*(Хӗвел тухăçӗ хӗрелсе килет)*
Кайса йарам-ха ыйха.
Вара унта курăнӗ... *(Тухат).*

Сасă *(стсенă хыçӗнђе).*

— Кунта атте çук-ши?..
*(Йӗри тавра пăхкаласа Уçтукпа Иван кӗреççӗ).*

Уçтук.

Атте-анне памасан,
Йепле пулӗ-ха вара? *(Шухăшласа).*

— Атте сана парас çук—
Вăл пуйана йуратаť.

Иван.

Хăвăн шухăшсем йепле:
Кама кайăн ес кађђа?—

Уçтук.

Ђунăм савман етемпе
Йепле ёмёр ирттерес?

Иван.

Апла пулсан, ђăрмав çук...
Аннŭпе çех сăмахла:
Хёрарăм вăл çемçерех.
Аннŭ хирёç пулмасан—
Пирён телей хамăрпах.

Уçтук.

Ну, калăпăр—
Анне вăл
Ман шухăшпа килёштёр.
Çапах ђăрмавё пур, вёт:

Иван.

Мён апла?..

Уçтук.

Ес ђиркёве кёретни,
Турă умне тăратни?..
Турă умне тăмасăр,
Венђет тавраш тумасăр
Йепле арăм пулас-ха?

Иван.

Шухăшла-ха ес, Уçтук.
Мĕне кирлĕ йапала—
Çав ђиркĕве кайасси?
Есĕ мана пĕлетĕн —
Мана ђиркў кирлĕ мар.
Есĕ мана йуратсан—
Ђиркўсĕр те йуратан.
Йуратмасассăн...
*(Шухăша кайса ларать).*

Уçтук.
Иван...
Есĕ мана илĕртен,
Йуратмастăн пуљ мана.

Иван *(пуçне çĕклесе).*

Йуратат ăп, ђун савни.
Анђах...
саншăн шухăша
Ђиркўпеле улшăнмасп...
Йуратат ăн пулсассăн,
Итле есĕ сăмаха:
Венђет туни мĕнех вăл?
Халĕ совет вирлĕрех!
Кайатпăр та çырăнатпăр...

Паљук *(стсенă хыçĕнђе):*

Çапах киле таврăнман...
Çав Иванпа иккĕшĕн
Мĕн те пулин пурах пуљ...

Уçтук (*хăраса*).

Иван, аҫа хăвăртрах—
Атте курсан аван мар.
(*Кайма тăрат*).

Иван.

Килтĕр, килтĕр, ан хăра.
Епĕ ăна хамăр май
Çавăратăп, ак курăн...
(*Уçтук туртăнкаласа тăрат*).

Палҫук (*кĕрет*).

А-аа! Есир кунта, курăнаҫ.
Мĕн шыраса çӳретĕр?..
(*Уçтука*) —
Пшол, киле!..

Иван.

Ан хăвала, сан ĕç мар...

Палҫук.

Ман хĕрĕмпе ман ĕç мар?
Тата камăн—сан ĕç-и? (*Йунаса*).
Ы-ых, çара çерçи...
Пуйан çумне çыпçасшăн.

Уçтук.

Атте, мĕн аташатăн?

Иван.

Есĕ, Уçтук, ан ҫĕн-ха,
Епĕ хамах майлаштарăп.

Паљук.

Майлаштаран, курăнаҭ.
Çамрăк хĕре илĕртен.

Иван.

Илĕртетĕп-и, çук-и—
Уна Уçтук пĕлтерĕ...
Епĕ ăна йуратап,
Вăл та мана йуратаҭ...

Паљук *(тĕлĕнсе).*

Иуратаҭ?... Уçтук,
Çакă çара çерçине
Йурататăн-и вара?
Еп сана!..

Уçтук *(Иван çумне çыпçăнса).*

Йурататăп еп ăна?
Сан Тăрвашсем кирлĕ мар.

Паљук *(çиленсе).*

Кирлĕ мар?.. Есĕ
Мĕн пĕлетĕн хаљ, айван?
Кама пама шухăшлап—
Çавна кађђа кайатăн.

Уçтук *(Ивана).*

Каларăм, вĕт, еп сана—
Аттен ирĕк йеплине...

Иван.

Ан куљљан...
*(Паљука).*

Тытса пама ирĕк çук.
Уçтук—пĕҫĕк аҫа мар.
Ыйт-ха есĕ хăйĕнҫен—
Кама кайма вăл шутлаҭ.

Паљук *(аллине çĕклесе).*

Вĕрент тата ес мана,
Хам пĕлетĕп—сан ĕç çук.
*(Уçтука).*

Уçтук, итле сăмаха:
Пупсем пире лартаҫҫĕç.
Халĕ ĕнтĕ апла мар—
Пупсем пире кирлĕ мар...

Паљук *(Уçтука сĕтĕрсе).*

Аҭа, аҭа килелле...
Çара çерçи сăмахне
Итлемешкĕн тĕс çук сан.

Уçтук *(ашшĕ аллинҭен вĕçерĕнсе).*

Епĕ пĕҫĕк аҫа мар.
Мĕн тумаллине пĕлеп.
Иван сăмахне итле—
Мĕн тумалла—шухăшла.

Паљук.

Итле, итле... Мĕн итлес?
Антихрис—вăл, етем мар...

Иван.

Паљук пиҫҫе, шухăшла...

Й а ђ у к.

Санӑн пиђђу пулмашкӑн—
Пирӗн аттесем тӑван мар.
*(Уçтука).*
Аҭа ђасрах килелле.

Уçтук *(хыттӑн).*

Ирӗксӗр есӗ мана
Кађђа тытса параймӑн...
Санпа пӗрле пымастӑп.

П а ђ у к *(çапма хӑтланат).*

Еп сана...

И в а н *(ӑка аллинтђен тытса).*
... ан çап!..

П а ђ у к *(çилленсе).*

Апла пулсан, еп сана
Пӗр йапала парас çук...
Есӗ манӑн ађа мар,
Уттар хӑвӑн çулупа...
Ы-ых, пулаҭ мӗн ађапђа...
*(Мӑкӑлтатса тухса кайат).*

И в а н.

Ентӗ, Уçтук, ес манӑн.
Аçу патне кайас çук.

У ç т у к.

Анне ентӗ мӗн калӗ...

Иван.

Мĕн калатăр... Ним тө мар...
Аннӳ пиллĕх паратех.
Пирĕн телей пулатех...
Пупсăр-мĕнсĕр, ҫиркӳсĕр
Пĕрлешрĕмĕр иксĕмĕр...

Уçтук.

Иван, тепле пулĕ çав.
Пăрахатăн пуҫ, тетĕп.

Иван.

Уçтук, апла ан аташ.
Сана ҫунтан йуратап.
(*Ҫуп-тăвасçĕ*).

Кĕтӳ хуса тухсанах
Советалла утăпăр.
Аҫа халĕ кайăпăр—
Петĕре те пĕлтерер.

Уçтук (*шухăшласа*).

Йалта пуçласа епĕ—
Тухап каҫҫа венҫетсĕр...

Иван.

Тĕрĕс, ҫунăм Уçтукăм!
Хĕрарăмсем те ĕнтĕ
Хăйсөн ирĕкне туйрĕç.
Тĕн ҫатăрне, пусмăра
Сирсе кăна сирпĕтĕç...

Уçтук.

Манăн çулпа малашне
Пур хĕрсем те утĕç-çкe.

Иван.

Пирĕн çулпа çамрăксем
Утĕç пурте малала,
Алла-аллăн тытăнса
Тăвĕç çĕнĕ пурнăçа!..

*(Ђаршав йерипен анат).*

---

## ИККЁМЁШ СТСЕНА.

*Ђухăн хрестђен пўртђĕ. Вăхăт каçалла сулăннă. Йакку вырăн çинтђе выртат.*

Йакку *(выртнă çĕртен тăрса).*

Ай-ай, пуçăм ыратат...
Пайан каллех сыпмалли,
Мухмăр тавраш ђĕртмелли
Пулсан питĕ аван-ђђĕ...

*(Шухăша кайат. Кĕтерук кĕрет).*

Кĕтерук.

Мĕн пуçна усса ларан,
Каллех ĕçес тетĕн-им?
Нихăçан та ыррине
Курасси çук санпала.
Ĕçкĕпех ес, йытă пиђĕ,
Йухăнтаратăн пурнăça.
Ех, так анђах...

Йакку.

Кĕтерук,
Хăш вăхăтра ĕçмесен
Йурамасĭ, вĕт, хăв пĕлен.

Кĕтерук.

Хăш ҫухне ҫеҫ пулсассăн,
Сана сăмах ҫĕнес ҫук...
Кам пур сан пек, йапăнҫăк,
Кунĕн-ҫĕрĕн ĕҫекен?
Йытă карланки!..
Ҫитменне,
Тата килти пурлăха
Салататăн ĕҫкĕпе...
Ех, анҫах... *(йĕрет).*

Йакку.

Ан йĕр, ан йĕр...
Йĕрсе ним те пулас ҫук.
Ну, ĕҫнĕ те иртнĕ вăл.
Урăх ĕҫмĕп...
...Ĕҫместĕп...

Кĕтерук.

Ес ҫăтăн-ши ĕҫмесĕр?
Килте выҫă ларатпăр,
Есĕ ĕҫсе ҫӳретĕн.
Кил-пуҫ тытас шухăшсем
Саншăн таҫтах ҫухалнă.

Йакку.

Ҫапли ҫаплах, хам пĕлеп.
Мĕн тăвас-ха ман ĕнтĕ:
Пурăнăҫăм ҫитменни...
Ҫав ĕҫтерет ĕҫкине.
*(Кĕтерук патне пырса).*

— Ну, çитĕ-çке, ҫарансам.
Çын мĕн илтсен, аван мар...

Кĕтерук.

Ех, пулаймаст, пулаймаст...
Ухмахпах ес ĕмĕре
Ирттеретĕн куранат.

*(Йĕрсе тухса кайат).*

Йакку *(сĕтел çине тҫавсаланса ларса).*

Çук пурнăçах пĕтерет.
Килте выçă лараççĕ...
Есĕ ĕçен-ĕçенех...
Мĕн тăвас тен, ĕççессĕн—
— Хуйхă-суйхă сирĕлет.
Ĕçнĕ ҫухне нихçан та
Пурнăç çукки палăрмаст.

*(Шухăшласа).*

— Ех, сыпмалли пулсассăн,
Пĕр шухăш та пулас çук.
*(Ҫӳретҫе çине тайăнса ларат).*

Паҙук *(тҫӳретҫерен шаккаса).*

Иакку, есĕ килте-и?

Йакку *(пуçне çĕклесе).*

А, Паҙук пиҫҫе, киҙах.
Кĕр пӳрте...

*(Хăй тĕллĕн).*

... Ентĕ карланкă
Йĕпенес пек туйăнат.

Паљук *(кĕрет).*

Епĕ, Йакку, ĕçпеле
Килтĕм пайан сан патна.
Ес тем тăвăн, те итлĕн—
Ман сăмаха те кĕршĕн...

Йакку.

Мĕн ĕç вара апла?

Паљук.

Таçтан, шалтан çӳређђен—
Тӳрех пуçлас сăмаха.
Мана леш каç çырмара
Ханша тунă вăхăтра
Пырса тытрĕ милитси.

Йакку *(тĕлĕнсе).*

Ну... Мĕнле вара апла?
Хаљђђен пулман йапала,
Мĕнле лекрĕн-ха есĕ?
*(Айккинелле).*
Ку та лекнĕ йапала
Ханша тăвасси йалта
Пĕтет пуљ-çке малашне.

Паљук.

Мĕнле пулђĕ çак инкек
Хам та пĕлмесп лайăххăн...
Ђипер йухнă вăхăтрах
Пырса кĕђĕç Петĕрпе
Шырлан Ваçук Çеменĕ...

Йухса пĕтнĕ тĕлелле
Персе çитрĕ милитси...

Йакку.

Ĕнтĕ сутсăр иртес çук.

Паљук.

Çавăнпала саң пата
Килтĕм епĕ, Йакку тус.
Сутра есĕ ман майлă
Пĕр-ик сăмах ђĕнмĕн-ши?

Йакку.

Тепле пулĕ пĕлместĕп.
Хаљ ĕç вăхăђĕ ĕнтĕ...
Килте ĕççем пулмасан,
Вăхăт пулсан тен пырăп.

Паљук
*(кĕсйерен ханша кĕлентђи кăларса).*

Ку инкекрен хăтăлсан
Епĕ хамăн туссене
Шыва кўртĕп ханшапа.
Йакку, кўр-ха ђеркине
Ĕçер кăштах иксĕмĕр.
Ĕçнĕ ђухне калаçма
Ђĕлхе-çăвар уçăрах...

Йакку *(ђерке илсе парса).*

Кăштах ĕçни—вăл ђармасĭ.
Анђах шутсăр ĕçсессĕн—
Асран кайан ухмах пек.

Паҫук *(тултарса).*
Курнă пул-ха, Йакку тус.

Йакку.
Курнă, курнă. Ҫипер ĕç.

Паҫук
*(Йаккуна тултарса парать).*
Йар-ха пĕрре. Йăвантар.
Ех, хайар-çке ханши те,
Çурат вара пыршăна.

Йакку *(ĕçсе).*
Ку ҫăнах та пит хайар.
Есĕ кунта темĕскер
Йарса тунă пулмалла?

Паҫук.
Мĕн аташан. Çук йаман.
Кăна тунă хам ваҫҫи.
Сутма тунă вăхăтра
Йаркаласси те пулат.

Йакку.
Паҫук пиҫҫе, итле-ха:
Тырă вырма тухаҫҫен
Пĕр-икĕ пăт памăн-ши?
Унпăн сана пĕр-ик кун
Ыраш вырса парăпăр.

Паҫук *(айккинелле).*
Ĕç майланассăн туйăнат...

*(Йаккуна)*

Парас, парас. Памасăр...
Анҫах, Йакку, итле-ха:
Манăн Уҫтук ҫитĕннĕ,
Каҫҫа пама вахăҫĕ.
Лăҫăр-лаҫăр памашкăн
Епĕ ҫук ҫын тавраш мар.
*(Йаккуна тултарса парат).*
Кĕрĕк ҫĕлетес терĕм,
Пĕр-икĕ тир ҫитеймест.
Санăн тирсем пур мар-ҫҫи?

Йакку.

Виҫ-тăват тир пурҫҫĕ-ха,
Ман хамăн та тумтирсем
Наҫарланнă малашне,
Ҫавăнпа хатĕрленĕҫҫĕ.

Паљук.

Сан ытлашши васкама
Кирлех мар-ҫке. Ҫапла, вĕт?
Пар-ха мана вĕсене,
Епĕ сана тыр парăп.

Йакку.

Кĕркуннеҫҫен тирсене
Епĕ пама пултарап.
Вара ун ҫух тавăрăн.
Тыр панăшăн арăмпа
Тырă вырса парăпăр.

Паљук.

Иурат, йурат апла та.,,

*(Айккинелле)*

Тирсем алла кĕрсесĕн,
Сана калла лекес çук.

Йакку *(хĕрĕнкĕрехскер).*

Килĕшрĕмĕр-и-ха ĕнтĕ?
Куншăн тепре ĕçес пуђ.
Ес лартатни, епĕ-и?

Пађук.

Кам лартасси—тиркев çук.
Çурма тусан та пырĕ.

Йакку.

Çук, çурмапа май килмест...
*(Ђарăнса).*

— Ну, çурма-тăк çурмалла:
Епĕ—пĕрре, ес—тепре.

Пађук *(кулкаласа).*

Ĕçме хам та ухутă...
Еппин кайса илем-ха. *(Тухат).*

Йакку *(пĕтђтђенех).*

Йепле ăнса пырат ĕç.
Вырăн çинђе выртнă ђух
Ăш çунаттђĕ латсăрах.
Ак хађ ĕнтĕ ĕçкĕне
Йарăнтаратпăр анђах...
*(Ђарăнса).*

Хĕрарăмсем килмесен,
Пайан вăхăт ирттерме

Пит те аванҫҫӗ ӗнтӗ.
*(Ӗҫет те йурлама пуҫлать).*

— Ӗҫнӗ ҫухне ӗҫетпӗр,
Хуйхӑ-суйха сиретпӗр.
Ҫиме ҫук ҫух йӗретпӗр,
Выҫлӑ-тутлӑ ларатпӑр...
*(Паҙук кӗрет).*

Йакку *(кулкаласа).*

Киҙах, кил. Ирт кунталлах,
Павӑл Иванҫӑ...

Паҙук *(кулкаласа).*

Йакку,
Есӗ мӗнле пӗҫҫенех
Йурра йара пуҫланӑ?

Йакку.

Тавай, тултар ҫеркине,
Йара парар йуррине.
*(Тултарса ӗҫет).*

Иванҫ, тыт-ха ӑстаккан,
Тултар унта хӑв ваҙҙи.

Паҙук *(тултарса).*

Апла ытлашши пулать...
Ҫапах йурӗ, мӗн тӑвас?
Ӗнтӗ пуҫлар йуррине.
*(Пӗрле йурлаҫҫӗ).*

Паљук.

Хура вăрман мĕншĕн
шавлаŤ?
Куллен турат ай
хушасшăн.
Еп савнатăп, мĕншĕн
савнап?
Хĕрĕм ўссе ай çит-
нĕшĕн...

Йакку.

Шăнкăртатса ай шыв
йухаŤ
Хăйахпа хумăш ай
хушшинђе.
Ирттеретпĕр ай
ĕмĕре
Пурлă-çуклă ай
пурнăçпах.

Йакку *(йурлама тђарăнса).*

Сан майлисем, Павăл Иванђ,
Тата урăх та пур-и?

Паљук.

Хамăр Иван ман майлă.
Иван кум та маншăнах.

Йакку.

Апла пулсан, аптрас çук.
Иван Иванђ пултараŤ...

Паљук.

Ђим-ха, ĕçер суттине.
Вара сăмах тупăнĕ. *(Ĕçеççĕ).*
Мĕнле, Йакку, тирсене
Есĕ парсах парăн-ши?..

Йакку.

Парап, тесе каларăм,
Кĕркуннеђђен кĕтмелле...

Есӗ мана ҫӑнӑхне
Хӑҫан пама пулӑн-ши?

Паҙук.

Пайан тесен—пайанах...
Саншӑн манӑн алӑксем
Йалан уҫӑ тӑраҫҫӗ...

Йакку *(айккинелле).*

Хӑҫантанпа апла-ши?

Паҙук.

Йакку, ман санпала
Тата тепӗр ӗҫ пур-ха...

Йакку.

Мӗн-ха тата?

Паҙук.

Йакку, ес
Сут-ха мана сурӑхна.

Йакку.

Пӗр сурӑх ҫеҫ йулнӑ, вӗт.
Ҙӑлха-алшиш тума та
Кирлӗ пулаӗ ҫӑм тавраш.

Паҙук.

Пӗр сурӑха пӑхма та
Кансӗртерех ӗнтӗ вӑл.
Халӗ санӑн ҫиме ҫук,
Выҫлӑ-тутлӑ ларатӑн.

Уншăн икĕ пăт çăнăх
Парăп сана йурать-и?

Йакку.

Сутасах та теместĕп.
Сутма шухăш тытсан та,
Икĕ пăтлах парас çук...

Паљук.

Мĕн ђулах тĕн, кала-ха?

Йакку.

Сутас пулсан—пиллĕк пăт.
Унтан кайа парас çук.

Паљук.

Ан та аташ, Йакку тус.
Пĕр сурăхшăн пиллĕк пăт?
Калаçмасăр-тумасăр—
Икĕ пăт та, пĕр ђетвĕрт.

Йакку.

Çук, çук, апла ĕç тухмасть.

Паљук.

Çав хакпала парсассăн,
Çĕн тырăђђен çимеллĕх
Ыйтнă тырра та парăп.
Сан ĕç хаклах тăрас çук,
Тыр вырма та ан пырăр.

Йакку.

Иртнĕ йункун пасарта
Иван Çтеппанђ сурăхне
Ултă тенке сутнă, тет.

Паљук.

Еп те сана çав шутах
Паратăп-çке, шутла-ха:
Икĕ пăђĕ—виç тенкĕ,
Ђетвĕрт хăнша — виç тенкĕ.

Йакку *(шухăшласа).*

Тем тăвас çав, аптратăп.
Арăмпа калаçам-ха —
Вара унта мĕн пулĕ.

Паљук.

Хĕрарăмпа ĕç тухмасť.
Сутас пулсан—килĕшер.
Еп те сана малашне
Кирлĕ пулăп, шухăшла.
Арăм ывăл çуратсан,
Сана епĕ кум тăвăп.

Йакку *(ўсĕрĕлнĕ).*

Мĕнле пулĕ, килĕшер.
Çапах тепĕр çур пăтне
Хушатăн пуљ, йураť-и?

Паљук.

Çур пăт хушма май килмест.
Вун кĕренкине хушăп.

Йакку.

Ну, йурĕ-çке. Килĕшер.
Килте выçă ларнă ђух
Вун кĕренке те усах.

Палђук.

Çапла вара пит аван.
Анђах кайран ес, Йакку,
Сутман тесе тунмăн-и?

Йакку.

Тунас-тăвас пулсассăн,
Еп сутмасп та, пĕлетĕн...

Палђук.

Çапах никам курмасан,
Шанђăк сахалтарах пек.

*(Ђӳретђерен пăхса)* —

А, ав кайат Иван кум...
Ана ђĕнсе илер-ха.

Йакку.

Йурĕ, йурĕ. Ђĕн, килтĕр.
Çынсем йышлăрах ђухне
Аван вара ĕçме те...

Палђук *(тђӳретђене уçса).*

Кил-ха кунта, Иван кум.
Санпа сăмах purђђĕ-ха.

Йакку.

Тата ес мăкăрђђине
Кайса ил-ха хăвăртрах. *(Сăрнай кĕрет).*
— Киђах, ирт-ха кунталла.

Сăрнай.

Килеп-ха. *(Пађука).* — Мĕн сăмах
вара?

Паљук.

Йакку сурăхне илтĕм.
Хакне çапла турăмăр:
Икĕ пăт та, пĕр ђетвĕрт,
Тата вунă кĕренке.
Кайран сăмах ан пултăр:
Килĕшнине курнă пул.

Йакку.

Йӳнĕрех те ĕнтĕ вăл...

Сăрнай.

Йурĕ, йурĕ, Паљук кум.

Паљук *(ура çинє тăрса).*

Есир кăштах ларăр-ха.
Епĕ кайса килеђ-ха. *(Тухать).*

Сăрнай.

Йакку, мĕнле пурнăçсем?
Ĕнертенпе ĕç мĕнле?

Иаккӳ.

Паҫӑр кӑштах йӑвӑрҭҫӗ.
Халӗ ӗнтӗ аптрамасҭ.

Сӑрнай.

Пирӗн Паљук кум сута
Лекнӗ пулас, апӑрша...
Аван ҫын-ҫке вара вӑл.
Ӑна ҫӑлма кирлех, вӗт.
Ес пулатӑн-и сутра?

Йакку.

Тепле пулаҭ, пӗлместӗп.

Сӑрнай.

Есӗ ӑна пулӑшсан —
Вӑл та сана пӑрахмӗ. *(Паљук кӗрет).*

Йакку.

Киљах, киљах, Павӑл Иванҭ...

Паљук (*сӗтел ҫине лартса*).

Мӑкӑрҭҭине ӗҫӗпӗр,
Ес те йул-ха, Иван кум,

Сӑрнай.

Мана апла аван мар.

Йакку.

Мӗншӗн аван мар пултӑр?
Пур ҭух пӗрле ӗҫӗпӗр—
Ҫук ҭух нимӗн тума та ҫук.

Паљук (*Йаккуна тултарса парса*).

Иакку, йăвантар-хале...

Йакку.

Курнă пулăр-ха, еппин. (*Ĕçет*).

Паљук.

Аван çапла ĕçнĕ ђух. (*Ĕçет*).
Тем тума та пултаран.

Сăрнай.

Йепле, ĕçсем ăнĕç-ши?

Паљук.

Мана камах таптайĕ?
Епир йалан çийелте...

Йакку (*ӳсĕрĕлсе çитнĕ*).

Çапла ĕнтĕ, çаплах çав.
Пуйан йалан çийелте...
Паљук...
Пайан иксĕмĕр
Пĕрле епир ĕçетпĕр...
Ыран...
Çапла çав вăл...

(*Кусĕсене ђарса Паљук çинелле пăхать*).

Сăрнай (*хĕрĕнкĕленнĕ*).

Йакку, есĕ ан аташ...
Сана мĕн тунă?.. Сире...

Йакку.

Мӗн тунӑ-ӑӑ?!..
Ҫапла, есир мӗн тунӑ?
Пирӗн йуна кам ӗҫет?
Пирӗн тарпа кам пуйать?..
Есир—куштан-пуйансем!..

Паҙук (ҭарса).

Ан хархашса кайӑр-ха.
Ҭипер ӗҫӗр—ӗҫнӗ ҭух.

Сӑрнай.

Вӑл хӑй ҫапла пуҫларӗ...

Паҙук.

Кум, ытлашши ан хӑтлан.
Кайран кансӗрӗ лекӗ...
(*Сӑрнай лӑпланнӑ пек пулать*).

Йакку (*йунаса*).

Сире-и... ҫӑтартӑпӑр
Малашне...

Паҙук.

Йакку, ес те
Лӑплан-ха.

Йакку.

Йурӗ. Анҭах
Манран аҥ кулнӑ пултӑр.
(*Лӑпланать. Ӗҫеҫҫӗ. Тӗттӗмленсе килет*).

Сӑрпай (*Паҫука*).

Кӑна шанатни вара?

Паҫук.

Шанҫӑк пур пек туйӑнать.

Йакку (*йурлать*).

Шӑпӑр-шӑпӑр ҫӑмӑр ҫӑвать,
Хӗрлӗ сӑрта йухтарать.
Хӗсӗк пурнӑҫ пӗрмайах
Пирӗн куҫ-ҫӳлне йухтарать...

Паҫук.

Ха, вӑл йепле ӳсӗрӗлҫӗ...
Аьа, йурлар, савнӑ кум. (*Йурлаҫҫӗ*).
— Хӗвел пӑхнӑ вӑхӑтра
Мӗншӗн ҫарран ҫӳрес мар?
Ҫухӑн ҫынна ҫаратнӑ ҫух
Мӗншӗн пирӗн савӑнас мар?..

Кӗтерук (*кӗрет*).

Кунта капла мӗн ӗҫки?

Паҫук.

Сурӑх ӗҫки ӗҫетпӗр.

Кӗтерук (*Йаккуна*).

Ес сурӑха сутрӑн-им?..
Кам пур сан пек, йал кулли,
Тупра сутса ӗҫекен...

Йакку.

(*Ура çине тăма хăтланса*).

Ес ытлашши... ши... ан ка... лаç...
Епĕ сана...

Кĕтерук (*Паԓука*).

Сурăх мар,
Пĕр ԓăхă та ман патран
Есĕ илсе кайас çук...
Кайăр тухса ман килтен.
Çирĕн уру хапхаран
Йарса пуснă ан пултăр...

Паԓук (*Йаккуна*).

Мĕнле есĕ—сăмахна
Тытса тăма пулăн-и?
Арăм хыççăн каймăн-и?

Йакку.

Епĕ кăтартăп ăна...

(*Кĕтерук патне пырса*).

Сăмах ан ԓĕн, тунката!..
Сан мĕн ĕç пур манпала?
Еп хамăнне хам пĕлеп.

(*Аллине пукан йарса илет*).

Кĕтерук (*йĕрсе*).

Ах, пĕтерен, пĕтере-е е е н...
Санпа ырă курас çук...

Паҫук.

Ан ман хăвăн сăмахна.
(Айкки́нелле).

Кунта ырри пулас çук.
Тухса шăвас килелле.

(Сăрнайа тĕксе, тухса кайат).

Йакку.

Ан йĕр тата, мелке пуç...

(Пуканпа арăмне перет те, Сăрнайа лектерет).

Сăрнай (ăна йарса илсе).

А... аа!... Есĕ апла-и?
Ҫĕннĕ хăна таврашне
Çапса-ватса йаратни?

(Иккĕшĕ тӳпелешеççĕ).

Кĕтерук.

Çук, ыррине курас çук.
Çав Паҫуках пĕтерет...

Йакку.

Епĕ сана, кулака!..
Кăларăп-ха пыршăна!..

Сăрнай.

Хăшĕ малтан пăҫăркĕ;
Хĕрлĕ автан кам çине
Ӳкĕ маларах вĕçсе?

Йакку.

Аа... есӗ апла-и? *(Çупса йарать).*
Ес çунтарас тетӗн-и?

Сӑрнай.

Çапах санах пӗтерӗп...
Манна пайтах хур турӑн,
Уншӑн тавӑратӑпах... *(Тухса кайать).*

Йакку.

Çунтараспа хӑратать;
Еп кӑтартӑп çунтарма...
Петӗр патне ҫупам-ха.
Çук, еп ӗçнӗ пулсан та —
Урaранах ӳкмен-ха.
Унтах епӗ çитӗп-ха.
*(Тухса кайма тӑрать).*

Кӗтерук.

Есӗ ӑçта?!.. йамастӑп.

Йакку.

Петӗр патне кайатӑп.
Еп кӑтартӑп Сӑрнайа
Вут-кӑварпа хӑратма. *(Тухать).*

Кӗтерук.

Ах, пӗтрӗмӗр, пӗтрӗмӗр.
Ӗçкӗпелех пӗтрӗмӗр... *(Йӗрет).*
Ҫам пур ун пек тӑп-тӑр кун.
Ӳсӗрӗлсе çӳрекен!

Кам пур ун пек, йал кулли,
Выҫӑх сутса ӗҫекен?
Ех, так анҫах... ку пурнӑҫ —
Ҫукран нихҫан хӑтӑлас ҫук...

Сасӑсем (*стенӑ хыҫӗнҫе*).

Пушар!.. Пушар!..
Вут тухрӗ!.. ай!..

Кӗтерук.

Ах, пӗтрӗмӗр, пӗтрӗмӗр...

(*Ниҫта кӗрсе кайаймасӑ, унта-кунта ҫупкалать. Икӗ ҫын кӗрсе йапалисене йӑтса тухаҫҫӗ*).

Ах... ах... аах... (*Анраса ӳкет*).

Сасӑсем.

Авӑ ҫырмана ҫупрӗ...
Ҫупӑр халех хыҫалтан...

(*Пушар вӑйлӑланнӑҫем вӑйлӑланса пырать. Пӳрте ҫӳреҫерен хӗп-хӗрлӗ сӑн ҫапать*).

Урӑх никам пулас ҫук...
Сӑрнай пахҫине ҫӑмрӗ...
Ҫавсен тавраш пулмалла...
Ҫупӑр халех килнелле...

Йакку (*ҫупса кӗрет*).

Кӗтерук мӗн пулҫӗ сана?
Ҫунатпӑр-ҫке, тух ҫасрах...

(*Кӗтерука сӗтӗрсе тухать те хӑвӑрт кӗрет*).

Сасӑсем.

Тавай насусне кунта...
Ҫапла, уҫлӑр лайӑхрах...

*(Шыв тъашкăрат. Пушар кăшт вăйсăрлана пуçлат).*

... Çавах, çавах... кам пултăр?—

Йакку.

*(Калле-малле уткаласа, пĕр тухат, пĕр кĕрет).*

Урăх çĕре сикмесен
Питĕ аванђђĕ те.
Тем,
Шанма çук çав кăвара...

*(Петĕр пырса кĕрет).*

Петĕр.

Йакку, питех ан кулђђан.
Лупасайанђах çунђĕ.

*(Вут çути вăйсăрлансах пырат. Петĕр тъўретъерен пăхат).*

— Шăхăмăçсем те çитрĕç...

Сасăсем.

Васук лупасайĕ çине
Насуспала шыв йарăр...
Улăм витнĕ йапала...
Шыв витнипе çунми тен.

Йакку.

Кам тĕртнĕ-ши? Пĕлђĕç-и?

Петĕр.

Çавă Сăрнай Иванех.
Хăйсен хăмла пахђине
Аран кĕрсе ђăмрĕ, тет.

Халĕ ĕнтĕ ку ĕçе
Айа тума йурамасť...
Ђим-ха, епĕ тухам-ха. *(Тухаť).*

Сасăсем.

Çапла, çапла сӳнтерĕр...
Урăх çĕре ан сиктĕр.

*(Пушар вăйсăрланса пырса, сӳнсе лараť. Тул çутăлса килет).*

Йакку.

Ех, хăйамат ĕçки...

Петĕр *(кĕрет).*

Йураť,

Ђарма ĕлкĕртĕмĕр.
Атту веçех çунаттăн...
Йакку ĕнтĕ малашне
Ĕçме пăрахмах кирлĕ.

Йакку.

Пăрахасђĕ, пăрахас...
Усси çукне хам пĕлеп.
Анђах мĕнле пăрахас?

Петĕр.

Пăрахасах тесессĕн,
Пулаť ăна пăрахма. *(Ђарăнаť).*
Йакку, Сăрнай Иванне
Сута памаллах пулаť.
Унпа пĕрле Паљука
Сутра путарма кирлĕ.

Йакку.

Вĕсем пулман пулсассăн,
Епир çапла пурнас çук...
Пире куштан хĕстерет,
Пур çĕрте те тĕп тăваť...

Петĕр.

Ĕнтĕ пирĕн малашне
Пĕтĕм вăйа пуçтарса
Ķĕрешмелле вĕсемпе.
Йалти куштан-пуйана
Хамăр çулран сирмелле...

Йакку (*шухăшласа*).

Еп ун хутне кĕрес çук.
Мана шанса тăр, Петĕр...
Сăрнай çинђен сут ваљљи
Есĕ çырса памăн-ши?

Петĕр.

Çирĕп пултăр сăмаху.
Йк ернерен суť пулаť...
Ирпе епир иксĕмĕр
Сăрнай çинђен çырăпăр.
Ну, хаљ кайса çыврам-ха. (*Тухаť*).

Йакку.

Ех, çунтараť ăшђике.
Каллех ĕçес килетех.
Мĕнле кăна пăрахас.
Мĕнле йĕркене кĕрес?

(*Сĕтел çинђен хаҥша кĕлентљине илсе*).

Ех, хăйамат, хăйамат,
Хăв йенеллех туртатăн.
Кам пурнăҫа пĕтерет?...
Ес пулмасан, тĕнҕере
Пурнăҫ лайăх пулмалла...
Ну, пайантан пуҫласа
Ĕҫме епĕ пăрахап,
Ман кил-ҫуртра кун йышши
Урăх нихҫан ан пултăр.

*(Кĕлентҕене персе ҫĕмĕрет... Тул ҫутăлат).*

Кĕтерук *(шуралса кайнă кĕрет).*

Ех, пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр...
Ĕҫкĕпелех пĕтрĕмĕр... *(Йаккуна курса).*
— А... есĕ кунта-и?..
Ес, пĕтермĕш, ҕĕрĕ-и?

*(Аллисене саркаласа Йакку патнелле пырат).*

Йакку *(ăна лăплантарса).*

Ытлашши ес ан хускал...
Епĕ ĕнтĕ урăх ҫын.
Ханша тавраш ҫăварта
Пĕр тумлам та пулас ҫук.
Куштан хыҫҫăн малашне
Еп кайас ҫук нихҫан та.

Кĕтерук *(йерипен).*

Ĕҫмелли мĕн пулсассăн,
Сана тытса ҕарăн-им?

Йакку *(урайнелле кăтартса).*

Авă, пăх ес унталла...

Кĕтерук *(савнăçлăрах).*

Йакку, ђăнах улшăнтăн-им?
Ђăнах есĕ малашне
Ĕçме пăрахас тетĕн-им?

Йакку.

Пăрахапах, пăрахап.

Кĕтерук *(аса илсе).*

Çурăх ăçта пирĕн, Йакку?
Йе илсе те кайнă-шим?

Йакку.

Ăçта, кам илсе кайнă?

Кĕтерук *(йĕрсе).*

Ех, Йакку, ĕнер хăвах
Сутнă-çке...

Йакку *(тĕлĕнсе).*

Кама сутнă?..

Кĕтерук.

Куштан Ивак Павăљне...

Йакку *(аса илсе).*

Ааа... Ханша ĕçнĕ вăхăтра...
Килтĕр-хале вăл кунта,
Епĕ сурăх кăтартăп! *(Ђарăнса).*
Каç кĕтўрен килнĕ-ђђи?

Кĕтерук.

Ђипер килђĕ, хам кўртрĕм...
Йе вăл çунса кайнă-ши? *(Каллех йĕрет).*

Йакку.

Ђим-ха, ыйтар çынсенђен.
Вĕсем пĕлĕç, ахăрттăн... *(Палук кĕрет).*
— А... килтĕн-и, выç кашкăр?—

Паљук.

Сурăх илме еп килтĕм...

Йакку. *(Сиксе тăрса).*

Сурăх илме?... Манран кулма...
Кам çунтарђĕ лупаса?—
Санăн ханшу çунтарђĕ...
Есĕ каллех çук çыннăн
Тирне сĕвме шутлатни?..
Парăп сана еп сурăх,
Сирпĕн халех ман патран...
Хам йулашки сурăха
Сана сутса ларап пуљ...

Паљук.

Ĕнер ĕçнĕ мăкăрђђи...
Тата Иван кум курни.

Йакку.

Ĕнер ĕçнĕ мăкăрђђи...
Сăрнай Иванĕ сан майли?..

Ав, ес мĕнпе хăратан.
Кай, кай кунтан, выç çăхан!..
*(Паҙука тĕксе кăларса йарат̆).*

Паҙук *(йунаса тухса кайат̆).*

Аса илĕн-ха мана...

Йакку *(арăмне).*

Илсе кайман курăнат̆.

Паҙук сасси.

Епĕ сире кăтартăп...
Ман патăмах пырăн-ха...

Петĕр *(ҭӳретҭерен шаккаса).*

Сирĕн сурăх çырмара...
Кайса хуса килĕрах...

Кĕтерук *(савăнса).*

Çырмара тен, ҙăнах-и?..
Епĕ халех ҙупатăп. *(Тухса кайат̆).*

Йакку.

Итле, Петĕр...
Пар аллуна...
Пĕрле ĕçлер малашне!

Петĕр *(аллине парса).*

Çапла, йулташ, ĕçлĕпĕр...
Куштансене хĕсĕпĕр.

## Йакку.

Пайан кунтан ҫăварта
Мăшкăлтăк шыв пулас ҫук.
Ханша инкек тунине
Епĕ пайан тин сисрĕм.
Сут умĕнҙе сăмаха
Епир ҫирĕп тытăпăр...
Ҫакă кунтан малашне
Ханша ĕҫне пĕтерер!..

*(Ҙаршав).*

## ВИҪҪЁМЁШ СТСЕНА.

*Сут пӳлӗмӗ. Сутйесем сӗтел хушшинҭе. Паҙук, Сӑрнай, Петӗр, Йакку тата урӑх ҫынсем саксем ҫинҭе алӑк патӗнҭе ларассӗ.*

Сутйе (*халӑх ҫинелле пӑхса*).

Пайанхи кун ҫакӑнта
Ханша туса ҫынсене
Хӗн-хур, сийен тӑвакан
Куштан ӗҫне пӑхӑпӑр...
(*Ҫыруҫӑна*)
Сута килнӗ ҫынсене
Тӗрӗслесе тухрӑр-и?

Ҫыруҫӑ.

Халех тухса тӗрӗслеп.
(*Аллине хут тытса, вулат*).
— Шырлан Петӗрӗ килнӗ-и?

Петӗр.

Пур...

Ҫыруҫӑ.

Хуравартн йалсовет
Претҫетатлӗ Иванов...

Паҗук.

Килте ӗҫсем пулнипе
Килеймерӗ вăл сута.

Ҫыруҫă.

Йакку Ваҫҫилйӗв.

Йакку.

...Кунта...

Ҫыруҫă.

Сăрнай Йакур Иванӗ...

Сăрнай.

Пур кунтах...

Ҫыруҫă.

Куштан Паҗук...

Паҗук.

Епӗ кунта...

Сутйе.

Ӗнтӗ вӗсен айăпне
Кунта епир итлӗпӗр...

*(Вулатъ).*

— „Айăплакан акт...
Ҫирӗмвиҫҫӗмӗш ҫулта,
Ҫу уйăхӗн варринҗе
Хураварти Паҗука
Хăй пахҗинҗе ҫырмара

Ханша тунӑ вӑхӑтра
Пырса тытнӑ милитси...
Ҫапла пырса тытаҫҫен
Виҫ-тӑват ҫул маларах
Вӑл ҫак ӗҫе пуҫӑннӑ...
Нумай йалта ҫынсене
Вӑл ханшапа ҫаратнӑ...
Выҫлӑх пулнӑ ҫулсенҫе
Вӑл нумайӗшне йӗртнӗ.
Мӗн пур таврари йалта
Пайтах сийен кӑтартнӑ...
Копператси лавккинҫе
Ун тусӗсем ларнӑ ҫух
Ӳнта ханша та сутнӑ...
Йалсоветне ӗҫлеме
Ҫаҫук ҫарса пурӑннӑ...
Йакку ҫуртне ҫунтарма
Паҫук ханши вӑй панӑ:
Сӑрнай ӳсӗр пуҫӗпе
Кураймасӑр Йаккуна
Пырса тӗртнӗ лупаса.
Ҫаҫукӗ те, Сӑрнай та,
Йалан пӗр канаш туса,
Ҫухӑнсене ҫаратнӑ...
Айӑпӗсем татах пур,
Каласа та пӗтес ҫук...
Ҫавӑнпала вӗсене
„Уколовнӑй котексӑн“
102-мӗш статйипе
Тата 175-мӗш статйапа
Айӑпласа сут тӑвар...“.

Сутйе.

Ҫвитетлӗсем тухӑр-ха.

*(Паҫукпа Сӑрнайсӑр пуҫне пурте тухаҫҫӗ).*

Айӑпланакан Паҫук,
Ӗсӗ хӑвӑн айӑпна
Йышӑнатӑн-и, ҫук-и?

Паҫук.

Айӑпӗ пур, ҫук,—теместп.
Анҫах пурте тӗрӗс мар.

Сутйе.

Мӗнле вырӑн тӗрӗс мар.

Паҫук.

Ханша тума пуҫлани
Хӗле кӗрсен ҫулталӑк.
Копператтив лавккинҫе
Ханшапала сут туман.
Йалсовет ӗҫне ҫарма
Ӗпӗ асра та тытман.
Йут йала мар, йалта та
Ханшапа еп суттуман...

Сутйе *(ҫарса пӗр хута вулат).*

„Ҫӳк уйӑхӗн вӗҫӗнҫе
Хураварти Павӑл Иванҫ
Кармалпала Йелҫӗкре
Ханша сутнӑ вун ҫетвӗрт.

Пĕр ҫухăна илĕртсе
Сурăх илнĕ ҫетвĕртле...“
*(Ҫарăнса).*

— Ҫак сăмахсем суйа-и?

Паљук.

Суйа, суйа пĕтĕмпех...
Ăна Йелҫĕкри Ухваҥ
Курайманнипе ҫырнă.

Сутйе.

Айăпланакан Сăрнай,
Ĕсĕ хăвăн айăпна
Йышăнатăн-и, ҫук-и?

Сăрнай.

Ҫынна епĕ ҫунтарман,
Паљук кумпа ҫыпҫăнман...

Сутйе.

Ҫвитеттĕлсем кăтартĕҫ
Камăн айăп мĕнлине...
Ҫвитеттĕл Йакку...

Йакку.

Халех...
Кĕретĕп, ҫимĕр-ха...
*(Кĕрет те алăк патне тăрать).*

Сутйе.

Иулташ, ирт ес кунталла.
*(Иакку сĕтел умнерех пырса тăрать).*
Ку ĕҫ пирки мĕн калăн?...

Иакку.

Нумай курнӑ хурлӑхне
Куштан пуйан ҫынсенӡен...
Паӆук манпа хирӗҫех.
Ҳанша тавраш тунӑ ӡух
Йалан мана ӡӗнеӡӡӗ.
„Йалта та хуҭ мӗн пулсан та,
Ес ман майлӑ пул“—теӡӡӗ.
Ѐпӗ ӗҫме йуратнӑ,
Ҫав ӗҫкӗпех йухӑнтӑм.
Мӗн пур ана-ҫарана
Тара патӑм Паӆука.
Выӆӑх-ӡӗрлӗх пӗтӗмпех
Кайрӗ Паӆук картине... *(Ӡарӑнаҭ).*

Суҭйе.

Кала, кала малалла.

Йакку.

Калап, хаӆ те калатӑп...
Хӑйне пырса тытсассӑн,
Ӗҫне хӑй май тӑваспӑн
Пыӡӗ мана ӗҫтерме.
„Ҫапла пулӡӗ, ҫапла“... тет.

Паӆук.

Ӑҫта пынӑ сан пата?
Хӑв пытӑн, вӗт, тыр ыйтма...

Суҭйе.

Есӗ халӗ ан ӡӗн-ха.

Ыйтсан калӑн кирлине.
*(Йаккуна).*

— Кала есӗ малалла...

Йакку.

Пыҫӗ вара ман пата...
Хӑйне мӗнле тытнине
Вӑл каласа пӗлтерҫӗ...
Унтан ханша кӑларҫӗ...
Ёҫнӗ хыҫҫӑн ёҫрӗмӗр...
Мана сурӑх суттарҫӗ...
Сурӑх сутнӑ майӗпе
Каллех ёҫме иултӑмӑр.
Унтан Сӑрнай Иванне
Ҫӗнсе кӳртрӗ ман пата.
(Вӗсен йӑхӗ пит шӑрҫҫах...).
Сӑрнай мана ҫиленсе
Ҫӗрле пырса вут тӗртрӗ...

Сӑрнай.

Сан ҫунма та нимӗн ҫук...
Кам кӗрет пуҫ ҫылӑха...

Сутйе.

Айӑпланакан Сӑрнай,
Ҫарӑр хӑвӑрӑн ҫӗлхӳне.

Йакку.

Йурат халӑх ҫывӑрман,
Ҫасах ҫарҫӗҫ пушарне.
Куштан мана пӗтерҫӗ,

Çавăнпа та еп кунта
Калап сире тĕрĕсне... *(Ларат).*

С у ť й е *(саççетаттĕлсене).*

Сирĕн ыйтмалли çук-и?

*(Пађукпа Сăрнай Йакку çинелле сивĕ куçпа пăхса лараççĕ).*

С а ç ç е т а т.

Çук...

С у ť й е *(Пађукпа Сăрнайа).*

Сирĕн ыйтмалли пур-и?

П а ђ у к.

Вĕсем суйма вĕреннĕ...

С ă р н а й.

Унтан ыррине илтес çук...

С у ť й е.

Шырлан Петĕрĕ...

П е т ĕ р.

Халех... *(Кĕрет).*

С у ť й е.

Милитсине калани
Кунта пирĕн умра пур...
Тата мĕн хушса калăн?

П е т ĕ р.

Çак Йакку пек çынсене
Пађук нумай çаратрĕ...
Пађук ханши йалсенђе

Нумай киле çунҭарђĕ.
Виçĕм кун çех Йелђĕкре
12 килĕ щăп çунђĕ.
Сăрнай йышши куштансем
Паљук кусси куçаççĕ.
Йалти ђухăн-вăтама
Пĕтермешкĕн шутлаççĕ.
Йакку çуртне тĕртнине
Нумай етем курнă, вĕт:
Пырса тĕртсен пахђине
Аран тарса хăтăлнă.
Каланипе çитет пуљ.
Вĕсен айăп мĕнлине
Есир хăвăр куратăр. *(Ларат).*

Сутйе *(саççетаттĕлсене).*
Сирĕн ыйтмалли çук-и?

Саççетат.
Çук...

Сутйе *(Паљукпа Сăрнайа).*
Ыйтмаллисем çук-и?

Паљук.
Вĕсем халĕ çамрăк. —

Сутйе.
Ыйтас пулсан, есĕ ыйт...

Паљук.
Пирĕн йалта миçе çын
Ханшапала суттăват?

Хăçан курнă-ши мана
Ханша сутма кайнине?

Петĕр.

Миçе çынне лайăххăн
Епĕ пĕлсе тăмастăп.
10-15 çухрăмра,
Хуть те камран ыйтсан та,
Паҫук ханшийĕ ҫапра...
Коппературатси лавккинҫе
300 тенкĕ çитмерĕ.
Ăна ăçта пытартăр?.. *(Ларать).*

Сутйе *(Сăрнайа).*

Санăн ыйтмалли çук-и?

Сăрнай.

Ыйтса—ырра илтес çук.
Ыйтмасассăн аванрах...

Сутйе.

Çвитеттĕлсем каларĕç.
Ĕнтĕ итлĕр хăйсене.
*(Сăрнайа).*

— Хăвăн айăпу çинҫен
Есĕ сăмах тыт-хале.

Сăрнай.

Мĕн калас-ши ĕнтĕ ман?
Ĕçнĕ ҫухне ĕçетпĕр.
Унсăр йепле пурăнан?

Сутйе.

Есĕ ĕç çинҫен кала...

Сăрнай.

Çаплах ĕнтĕ, çаплах çав.
Ĕç çинҫенех калатăп.
Йепле ĕçмесĕр пурнас?
Паҫук кумпа пит аван
Пурăнатпăр халиҫҫен.

Сутйе.

Есĕ Йакку лупасне
Вут тĕртни çинҫен кала.

Сăрнай.

Вут тĕртни çинҫен?

Сутйе.

Çавăн
Çинҫен кала çав...

Сăрнай.

Йурĕ.
Иакку сурăхне илсен,
Мăкăрҫҫине ĕçрĕмĕр.
Йакку ӳсĕрĕлнипе
Мана пуканпа пеҫĕ,
Вара пуçланҫĕ... *(Ҫарăнат).*

Сутйе.

Есĕ Иакку лупасне
Мĕнле майпа вут тĕртрĕн?

Сăрнай.

Мĕн çунмалли пултăр ун?
Пĕр пӳрт пур та, лупасай...
Ун пек çукпа пурнаҫҫен —
Пĕтни аванрах...

*(Айккинелле).*

— Мĕн епĕ ухмахланап?..

Сутйе.

Мĕнле терĕн?

Сăрнай.

Çук. Епĕ
Ҫухăн çыннăн пурнăçĕ
Йухăннăçем йухнаť, теп.

Сутйе.

Хăш вăхăтра вут тĕртрĕн?

Сăрнай.

Уна хам та астумасп?..
Ним калама аптратăп.
Ӳсĕр пуçпа хăтланнă...
Паҫук кум та хĕтĕртрĕ...

*(Паҫук Сăрнай çинелле шурă куçĕсемпе пăхкалать).*

Вăл пĕтĕмпех çунман, вĕт.
Уншăн айăп та сахал... *(Ҫарăнать).*

Сутйе.

Тата есĕ мĕн калăн?

Сăрнай.

Урăх каламалли çук. *(Ларат).*

Суйе *(саççетаттĕлсене).*

Сирĕн ыйтмалли пур-и?

1-мĕш саççетаттĕл.

„Паљук хĕтĕртнĕ“ терĕн.
Вăл мĕне пĕлтерет?

Сăрнай.

Нимĕнех те мар...

Суйе.

Кала есĕ тÿррипе.

Сăрнай.

Епир ăна тахçанах
Пĕтермешкĕн... *(Ђарăнат).*

Суйе.

Кала малалла...

Сăрнай.

Каламастăп...

Суйе *(Паљука).*

Сан йулашки сăмаху.
Каламаллине кала.

Паљук

*(сухалне шăлса, пуçне усса).*

Петĕр мана кураймасть.
Пĕлтĕр вĕсен йал çинђе

Нумай пусса куçас ĕç
Май килмерĕ, çавăншăн
Вĕсем пире кураймаççĕ.
Копператси лавккинҫе
Хам ирĕккĕн ĕçлемен:
Мана халăх суйланă...
Совет влаçĕ пирĕншĕн
Ытлашши пит кансĕр мар.
Камун тавраш хăш ҫухне
Иртĕнеççĕ, çав пулаť.
Хам тăрăшса ĕçлесе
Хуçалăха йусарăм.
Çавăнпа та вара еп
„Кулак“ йатне те илтрĕм...
Ханша тавраше нихçан,
Сутма туман, турă пур...
Тӳлемелле пулсассăн,
Çĕр тенкĕ те тӳлĕттĕм.
Кил хушшинҫен ниçта та
Кайса ларас марҫҫĕ-çке. *(Ларат).*

Сут̆йе.

Сут канашлама кайаť.
*(Пурте тăраççĕ. Сут̆йесем тухса кайаççĕ).*

Сăрнай *(Петĕре).*

Манка, хаљ ес лайахxăн
Шурăнма та пуçлайман.
Пире хирĕç тăратăн.
Йала пырсан мĕнлине
Хам пĕлетĕп, курăн-ха...

Петӗр.

Йаккуна ҫунтарнӑ пек,
Мана та ҫунтарас тетним?

Сӑрнай.

Сире-и камунсене.
Мӗн тумалли курӑнӗ...

Паҙук *(Йаккуна).*

Ееех, ҫара ҫерҫи...
Камун хыҫҫӑн кайатӑн.
Ҫиме пырса ыйтӑн-ха...

Йакку *(кулса).*

Нумай ҫинӗ сирӗнне...
Ҫинипе те ҫитӗ-ҫке.

Петӗр.

Ҫире шансассӑн — йалта
Йалан ҙухӑн айалта...

Паҙук *(Сӑрнайа).*

Мӗнле есӗ, Иван кум,
Персе йатӑн сӑмахна...

Сӑрнай *(Петӗре).*

Ҫире—камун таврашне
Йепле ҙарӑн хаҙ ӗнтӗ?
Есир— халӗ пуҫлӑхӗ...

Петӗр.

Хамӑр ҫине таптама
Памӑпӑр-ҫке малашне.

Йакку.

Петĕр, пайантан ĕнтĕ
Пĕрле ĕçе тытăнар...
Ĕçме епĕ пăрахрăм.
Пуйан-кулак таврашне
Сирер хамăр ĕç панҫен.
Хир таврашне малашне
Ҫумай пусса уйрăпăр,
Йалти ҫухăн-вăтама
Коллектива пухăпăр.

Петĕр.

Пирĕн шухăшсем çапла...

Сăрнай *(Паҫука).*

Итле-ха, кум, итле-ха:
Мĕн йурлаççĕ камунсем?
Çапах вĕсен йуррине
Пӳлĕпĕр-çке хамăрах...

Паҫук.

Кунтан çăлăнса йулсан,
Мĕн тумалли курăнĕ.
Тепле тăвĕç, пĕлме хĕн...

Çыруçă *(кĕрсе).*

Сут килет!..

*(Пурте ура çине тăраççĕ те, шăп пулаççĕ. Сутйесем кĕрсе вырнаçаççĕ).*

## Сӳйе *(вулат).*

„Ҫӑвашсен Автономлӑ Сотсиалисӑмпа Совет Респуплӗкӗ йаҫӗпе... 4-мӗш уҫҫаскӑри халӑх сӳйи Иванов, халӑх ҫаҫҫетаттӗлӗсем— Петровпа Куҫмин, ҫыруҫӗ Йекоров пайанхи ларура, 1923-мӗш ҫулта ҫӗртме уйӑхӗн 3-мӗшӗнҫе, Хураварти куштан Ивак Паҫукӗ ханша тунӑ ӗҫпе Сӑрнай Иванӗ (ҫав йалсемех) хӑйсен йалӗнҫи ҫухӑн Йаккуна вут тӗртсе ҫунтарни ҫинҫен, тата Паҫук Сӑрнайа ку ӗҫе тума хӗтӗртни ҫинҫен пӑхса тухса, свитеттӗлсем кӑтартнине итленӗ хыҫҫӑн ҫакӑн пек айӑпсем тупрӗ:

1) 3-4 ҫул хушшинҫе куштан Паҫук ханшала нумай ҫынна ҫаратнӑ. Тата йалти советпа копператси лавккинҫе хӑйне усӑ кӳресшӗн вӑл ӗҫлесе пурӑннӑ. Ҫавӑнпала вӑл „Уколовнӑй котексӑн“ 102-мӗш статйипе айӑпланат. Кунсӑр пуҫне куштан Паҫук Сӑрнайа Йакку ҫуртне вут тӗртме хӗтӗртнӗ. Ҫавӑнпала Паҫука 2 ҫуллӑха тӗрмене хупмалла... Тӗрмерен тухсассӑн Ҫӑваш респуплӗкӗнҫен 3 ҫуллӑха кӑларса йамалла тавас.

2) Хураварти Сӑрнай Иванӗ йал кулакӗсемпе пӗрле ӗҫлесе, вӗсем хӗтӗртнипеле, тата ҫухӑнсене таптасшӑн тӑрӑшса, йалти ҫухӑн Йаккунне лупасайне вут тӗртнӗ. Унӑн айӑпӗшӗн, „Уколовнӑй Котексӑн“ 175-мӗш статйи кӑтартнипе, ӑна, Сӑрнай Иванне 5 ҫуллӑха тӗрмене хупмалла... Тата тӗрмерен тух-

сан 3 çул хушши суйлав прави парас мар.

3) Кунсăр пуçне, Хуравар йалсовет претçетаттĕлне Иван Иванова, пуйансене хӳтлесе сута килмесĕр йулнăшăн, 25 тенкĕ штрав тăвас.

*(Прикăвăра вуланă тъух Паљукпа Сăрнай пĕр шуралса, пĕр хĕрелсе, ниçталла мар пулса тăраççĕ).*

Йакку.

Çапла туни аван та...

Петĕр.

Ханша пĕтсе ларсассăн,
Йал пурнăçĕ улшăнĕ.
Пире кулак таптаймĕ...

Сăрнай.

Хам ухмахпах лекрĕм-çке.
*(Пуçне усать).*

Паљук *(пуçне тытса).*

Е-е е ех, ех-ех-ех...
Ханшапах еп тĕп пултăм...
*(Паљукпа Сăрнайа милитсисем илсе тухса кайаççĕ).*

*(Ђаршав йерипен анать).*

---

Хакĕ 40 пус

Цена 40 коп.

Х.

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

И. ВИКТОРОВ. В овраге (пьеса в 3 сценах)

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР
МОСКВА, ЦЕНТР, НИКОЛЬСКАЯ, 10